**Юрăçă пулма турă пÿрнех те пулĕ çав…**

Альбина Иванова-Сарри… Час-часах Чăваш радио тата телевидени передачисенче янăрать унăн уçă сасси, эстрада çăлтăрĕсен конкурсĕсенче итлесе савăнатпăр.

Иванова Альбина Сергеевна 1954 çулхи сентябрĕн 12-мĕшĕнче Матькасси ялĕнче çуралнă.

**Юрăçă асаилĕвĕнчен**: Пирĕн çемьере пилĕк ача пулнă. Аттене астумастăп, вăл эпĕ виççĕре чухнех вилнĕ. Анне Таисия Ивановна Иванова, йывăр чирлĕскер, пире, тăвата ачана, Шупашкарти 2-мĕш интернат-шкула леçнĕ. Унччен эпĕ Çĕнĕ Пинерти пуçламăш, Энтрияльнчи вăтам шкулсене çÿренĕ. Шкулта вĕреннĕ чухнех сцена çине тухма манăн пысăк ĕмĕт пурччĕ. Эпĕ балет шкулне те кĕрес тесе питĕ тăрăшса пăхнăччĕ, анчах тĕрлĕ сăлтава пула çак ĕмĕт пурнăçланаймарĕ.

Юрлама анне юрататчĕ, эпир, ачасем, унран вĕренеттĕмĕр. Шел, аннене çамрăклах пытармалла пулчĕ. Ялта чухне хĕрсемпе «Мĕншĕн-ши эп сана пит юратрăм?» юрра юрлаттăмăр.

6–8- мĕш классене эпĕ Шупашкарти интернатра вĕреннĕ, çав çулсенче хулари пĕр клуба хĕрарăмсен вокал ансамбльне çÿреме пуçларăм. Темиçе çул хушши юрларăм унта. Ансамбль ертÿçи Юрий Решетов: «Сана музыка училищине вĕренме кĕртес мар-и? Санăн талант пур», - тетчĕ. Эпĕ: «Мана эсир вырнаçтарни кирлĕ мар, эпĕ хамах тăрăшатăп», - теттĕм. Çĕрпÿ хулинчи культурăпа çутĕç училищине вĕренме кĕтĕм. Экзаменра СССР халăх артисчĕ Л. Зыкина репертуарĕнчи «Песня о России» юрра шăрантарсан мана хаваспах йышăнчĕç.

Эпĕ ача чухнех хам тĕллĕн вăрттăн юрлаттăм, ÿссен пурпĕрех юрăçă пулатăп, анчах тĕплĕн вĕренсе çитмесĕр çынсене халех систерем мар-ха теттĕм.

Училищĕре мана вокалпа О.Я. Агакова педагог вĕрентетчĕ, вăлчунне парса пирĕнтен çын тума тăрăшатчĕ. Чи юратнă учитель Ю.В.Васильев пулнă, вăл сальфеджио вĕрентнĕ. Халĕ вăл ятлă-сумлă ăстаçă, Чăваш юрăпа ташă ансамблĕн ертюçи» А.Иванова-Сарри çĕрпÿри училищĕрен вĕренсе тухнă хыççăн Шăхасанти тата Вăрнарти Культура çурчĕсенче тăвата çул ĕçленĕ.

**С. Баранова çырнинчен – «Çăлтăр хыççăн çăлтăр» интервьюран** (Вучах. 1995. Февралĕн 15-мĕшĕ):

- *Альбина, училищĕне вĕренсе пĕтерсен ĕç-хĕл мĕнле çул-йĕрпе кайрĕ?*

- Алла документ илсен Культура çурчĕсенче тăрăшрăм. Хама юрăсăр пурăнма пултарнине тĕрĕслес тесе бухгалтери курсне вĕренсе тухрăм, 10 çул хушши шут ĕçĕнче тертлентĕм. Анчах юрăсăр пурнăç çук. Юрă маншăн – Турă пани. Юрăçă пулма Турă пÿрнех те пулĕ çав…

- *Ман шутпа, пурнăç юрăран кăна тăмасть, хĕрарăма çулсем иртнĕçемĕн юрату та кирлĕ-çке?*

- *Сарра Леонтьевна, ăнлантăм Эсир шак хунине. Çемьеллĕ те пулнăччĕ, анчах… ачам вилчĕ, упăшкапа та çулсем икĕ еннелле уйрăлчĕç.*

**Н. Смирнова çырнă «Аттестаци пулăшнипе…» интервьюран** (Хыпар. 1994.Нарăсăн 19-мĕшĕ):

- *Паллах пур хĕр ача пекех, мĕн пĕчĕкренех артистка пулма ĕмĕтленнĕ-тĕр?*

Чăн та, юрлама питĕ юрататтăмччĕ. Çĕрпÿри культурăпа çутĕç училищинчен вĕренсе тухнă хыççăн Культура çурчĕсенче ĕçлерĕм.

- *Хăçанччен?*

-Качча тухса Мускава кайиччен.

- *Унта юрламан-и?*

- Лихачев ячĕллĕ заводра кладовщицăра ĕçленĕ. Унтан Çĕнĕ Шупашкара таврăнсан «Химпрома» та кладовщицăнах вырнаçрăм, каярах «Стройтехника» заводра бухгалтерта тăрăшрăм.

- *Тепĕр хут юрлама пуçласси мĕнпе çыхăннă вара?*

- Шăпах «Стройтехника» заводри аттестаципе. Ун чухне завод директорĕ И.Т. Дерюгин эпĕ культурăпа çутĕç училищине пĕтернине пĕлсен çапла каларĕ: «Хальлĕхе сана аттестацилеместпĕр-ха, енчен те тепĕр уйăхра заводра художество пултарулăх ушкăнĕ

Йĕркелен, ун чухне - пăхăпăр». Ирĕксĕрех юрласа яма тиврĕ. Хăй вăхăтĕнче Химиксен керменĕнче И. Мацко ертсе пыракан ансамбле те çӳренĕччĕ. Çавăнпа та мана йывăрах килмерĕ. И. Мацкон мăшăрĕ баянпа ăста каланине аса илтĕм, ăна хамăр пата явăçтартăм. Шăпах тепĕр уйăхран малтанхи концертсене Çĕнĕ Шупашкарта кăтартрăмăр, çур çултан – Подольск, Влалимир, Ярославль хулисенчи заводсенче.

**- Н. Смирновăн «Юрă - çумăр витĕр – чечекпе юрă тĕнчине» интервьюран** (Çамрăксен хаçачĕ. Юпа уйăхĕн 5-мĕшĕ):

- *Кампа сан чунна уçса калаçас, хăвăн паянхи шăпу, кун-çулу çинчен каласа кăтартас, камран канаш ыйтас килет?*

- Анне сăнарĕ яланах умра. Сасси вăйлă та хитреччĕ. Унпа пĕрле хамăн та юрлас килсе тăратчĕ. Ал ĕçĕ е ыттипе айкашнă май шăрантаратчĕ. Кӳршĕ-аршăсем пӳрте кĕнĕ чухне шăплăнатчĕ. Лешсем вара радиона ан чарăр-ха, илемлĕ юрă параççĕ тетчĕç…

Эстрадăра нумай çулсем хушши ăнăçлă ĕçленĕшĕн Альбина Саррине 2004 çулта «Чăваш республикин тава тивĕçлĕ культура ĕçченĕ» ят парса чыс та хисеп тунă.

Ку таранччен Альбина Сарри юрлакан юрăсем сакăр кассетăра, икĕ компакт-дискра тухнă

*Библиографи:*


1. Прокопьев, В. «Юрăçă пулма турă пӳрнех те пулĕ çав…» / В.Прокопьев // Канаш тăрăхĕн ятлă-сумлă çыннисем. – Шупашкар, 2005. – С.269-273.
2. Баранова, С. Çăлтăр хыççăн çăлтăр / А. Сарри // Вучах. – 1995.
3. Смирнова, Н. Аттестаци пулăшнипе… / А. Сарри // Хыпар. – 1994.
4. Прокопьев В. П. Хрусталев Гаврил Филиппович / В.П. Прокопьев // Канашский район: энциклопедия персоналий. – Чебоксары, 2014.-С. 456





Район тĕп библиотекин информаципе библиографии пайĕ
Пухса хатĕрлекенĕ Т. В. Николаева
Тел.49-7-00, e-mail: library-shihazan@ya.ru



Канаш районĕн теп библиотеки


# Юрăç çăлтăрĕ Альбина Сарри



(65 çул тултарнă ятпа)


Шăхасан сали
2019 ç.